9-72

РАССЕЙ ХВЕТЕРАТСИЙЕН СОТСИАЛИСАМПА КАНАШ РЕСПУПЛИККИ.

*Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕрĕ*

Л. ТОЛСТОЙ и А. ПУШКИН.

# ТĂР УХМАХ. ПУЛĂҪĂПА ЫЛТТĂН ПУЛĂ.

(Дурень. Сказка о рыбаке и рыбке).

На чувашском языке.

Тĕп Ҫăваш Пайĕ кăларнă.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.
ХУСАН—1919 ҪУЛ.

Казань. Третья Государственная Типография.

# Тӑр ухмах.

Шухӑшланӑ пӗр ухмах
Инԏе кайса ҫӳреме,
Ҫут-ҫанталӑка курма,
Хӑйен ӑсне кӑтартма.
Кайсан кайсан ҫак ухмах
Икӗ пушӑ пӳрт курат̆.
Пушӑ пӳртӗн сакайнԏе
Шур шуйттансем лараҫҫӗ.
Шуйттансенӗн пуҫӗсем.
Шакла, йумӑҫ шӑрԏӗ пек,
Шӗвӗр, йӳҫӗ кӑшман пек;
Мӑйракисем сенӗк пек,
Алли-ури кӗрешле пек,
Куҫӗ вӗсен кашӑк пек,
Хӳри вӗсен вӗрен пек
Картла хӑйсем выԓаҫҫӗ,
Укҫисене шутлаҫҫӗ.
Ухмах калат̆ вӗсене:
Турӑ сире пулӑштӑр,
Сире ырӑ ҫынсене!

Шуйттан ырра йуратмаст.
Сырӑнҫӗҫӗ ухмаха,
Тытӑнҫӗҫӗ хӗнеме,
Вилес патне ҫитерсен
Чин йаҫӗҫӗ ирӗке.

Ухмах йӗрет, макӑрат,
Хӑйен килне таврӑнат.
Амӑшӗпе арӑмӗ
Тытӑнҫӗҫӗ ухмаха
Ҫӗлхе-ҫӑвар йӗркине
Тӗплӗ, хытӑ вӗрентме:

„Ухмах есӗ, пит ухмах
Санӑн ҫавӑ сӑмахах
Каламалаҫ урӑхла,
Каламалаҫ ак ҫапла:

„Турӑ сире ылхантӑр,
Сире етем тӑшманне.
Вара вӗсем шуйттансем,
Тарса пӗтнӗ пулӗҫҫӗҫ,
Вӗсен ылттӑн-кӗмӗлӗ
Сана йулнӑ пулӗҫҫӗ“.

Ухмах ҫакна илтрӗ те,
Ӑслӑланса ҫитрӗ те,
Калат хӑйен сӑмахне
Амӑшӗпе арӑмне:

„Йурӗ, епӗ ӗнтӗ малашне
Ухмах пулмӑп ҫакӑн пек“.

Каллех кайат̆ çав ухмах
Тĕнђе тăрăх çӳреме,
Çут çанталăка курма,
Хăйен ăсне кăтартма.

Кайсан кайсан çак ухмах
Курат̆ виçĕ тăвана.
Виçĕ тăван пĕр тăван
Урпа тырă выраççĕ.

Ухмах калат̆ вĕсене:
„Тура сире ылхантăр,
Сире етем тăшманне“!
Виçĕ тăван пĕр тăван
Йађĕç илђĕç ухмаха,
Тытăнђĕçĕ хĕнеме
Вилес патне çитерсен
Тин йађĕçĕ ирĕке.

Ухмах йĕрет, макăрат̆
Хăйен килне таврăнат̆,
Амăшĕпе арăмĕ
Тытăнђĕçĕ ухмаха
Ђĕлхе-çăвар йĕркине
Тĕплĕ хытă вĕрентме.

„Ухмах есĕ тем пекех,
Хăвăн пуçу çук пекех,
Санăн çавă сăмахах
Камалађ урăхла,
Камалађ ак çапла:

„Турă сире пулăштăр,
Сирĕн ĕçе ăнтартăр!
Шуҫĕ пултăр çĕрщерĕн,
Кунĕн-çĕрĕн турттарма“!

Ухмах çакна илтет те,
Ăслăланса çитет те,
Калаҭ хăйен сăмахне
Амăшĕпе арăмне:

„Йурĕ, епĕ ĕнтĕ малашне
Ухмах пулмăп çакăн пек“.
Каллех кайаҭ çак ухмах
Тĕнҫе тăрăх çӳреме,
Çут-çанталăка курма,
Хăйен ăсне кăтартма.

Кайсан кайсан çак ухмах
Çиҫĕ тăван тĕл пулаҭ.
Çиҫĕ тăван пĕр тăван
Пытараççĕ амăшне,
Пурте вĕсем йĕреççĕ,
Макăраççĕ, ӳлеççĕ.

Ухмах калаҭ вĕсене:
„Турă сире пулăштăр!
Сирĕн ĕçе ăнтартăр.
Шуҫĕ пултăр çĕрщерĕн
Кунĕн-çĕрĕн турттарма“!

Çиҫĕ тăван тытăнҫĕç,
Йаҫĕç илҫĕç ухмаха,

Ҫышкисемпе хӗнеҫҫӗ,
Урисемпе тапаҫҫӗ,
Лапра ăшне ҫикеҫҫӗ.

Вилес патне ҫитерсен
Тин йаҫӗҫӗ ирӗке.
Ухмах йӗрет, макăрат,
Аран-аран уткалат
Хăйен килне таврăнат.

Амăшӗне арăмӗ
Тытăнҫӗҫӗ ухмаха
Ҫӗлхе-ҫăвар йӗркине
Тӗплӗ хытă вӗрентме:

Ухмах есӗ ҫав ҫавах
Тăну-пуҫу ăҫта сан!
Санăн ҫавă сăмахах
Каламалаҫ урăхла,
Каламалаҫ ак ҫапла:
„Ан хуйхăрăр, ан йӗрӗр
Пурте вилӗ пулăпăр.
Ҫăмăл пултăр ăна ҫӗр!
Турă кӳрттӗр ун ҫунне
Хăйен ҫӳлти райне!

Ҫапла каланă пулсан
Вӗсем сана йуратса,
Икерҫӗсем панă пулӗҫҫӗҫ“.
Ухмах ҫакна илтрӗ те,
Хăлхине хыт ҫикрӗ те,

Ăслăланса çитрĕ те
Тухрĕ кайрĕ тĕнҫене
Çут-çанталăка курма,
Хăйен ăсне кăтартма.

Ăна хирĕç туй пырать.
Ухмах калать вĕсене:
„Ах хуйхăрăр, ан йĕрĕр,
Пурте вилĕ пулăпăр.
Çăмăл пултăр сире çĕр!
Турă сире пурне те
Кўрттĕр хăйĕн райне!
Туй пуç йаҫĕ пуçласа
Каҫҫи кайрĕ ун хыççăн,
Каҫҫи хыççăн çĕнĕ çын;
Кĕçĕн кĕрў тункати
Вăл та ахаљ тăмарĕ:
Тытăнҫĕçĕ ухмаха
Нухаљкапа пĕçертме
Ҫышкăсемпе тепкеме
Вилĕс патне çитерсен
Тин пăрахса хăварҫĕç.
Ухмах йĕрет, макăрать,
Аран-аран уткалать,
Хăйен килне таврăпать.
Амăшĕпе арăмĕ
Тытăнҫĕçĕ ухмаха
Ҫĕлхе-çăвар йĕркене
Тĕплĕ, хытă вĕрентме:

Ухмах ӧсӗ, тӑмана,
Ҫавӑ кирлӗ найана!
Санӑн ҫавӑ сӑмахах.
Каламалаҭ урӑхла,
Каламалаҭ ак ҫапла:

Турӑ сире пиллетӗр,
Кӑҥаҫпа каҥаҫ майрине,
Саккун тӑрӑх пурӑнма,
Аҭа-пӑҭалӑ пулма!

— „Йурӗ. Епӗ ӗнтӗ малашне
Ухмах пулмӑп ҫакӑн пек“.
Ухмах кайрӗ пиҭене
Тӗнҭе тӑрӑх ҫӳреме,
Ҫут-ҫанталӑка курма,
Хӑйен ӑсне кӑтартма.

Пырат хирӗҫ пӗр манах
Ухмах ӑна калат:
„Турӑ сире пиллетӗр,
Манахпала майрине
Саккун тӑрӑх пурӑнма,
Аҭа-пӑҭа ҫуратма!

Манах ватӑ пулин те
Йарса илҭӗ ухмаха,
Ӑна ҫапса хӗнерӗ
Туйи ванса пӗтиҭҭен.

Ухмах йӗрет, макӑрат,
Аран-аран уткалат,

Хӑйен килне таврӑнать.
Амӑшӗпе арӑмӗ
Тытӑнҫӗҫӗ ухмаха
Ҫӗлхе-ҫӑвар йӗркине
Тӗплӗ хытӑ вӗрентме:

Ухмах есӗ, мӑнтарӑн!
Ӗҫне хӑҫан ӑнтарӑн!
Санӑн ҫавӑ сӑмахах
Каламалаҫ урӑхла,
Каламалаҫ ак ҫапла:

Пилле мана, мушике,
Таса ҫветтуй икумӗн!
— „Йурӗ. Епӗ ӗнтӗ малашне
Ухмах пулмӑп ҫакӑн пек“.
Туххӑрӗ те уттӑрӗ
Ҫут-ҫанталӑка курма,
Хӑйен ӑсне кӑтартма.

Курать ухмах вӑрманта,
Ҫӑрӑш йывӑҫ тӗлӗнҫе
Упа-муҫи лесӗрнпе
Ҫиҫе тӑрать пӗр ӗне.

Ухмах унта пырать те
Упа умне тӑрать те,
Пуҫне ҫӗре тайать те,
Калать ҫакӑ сӑмаха:

„Пилле мана, мушике,
Таса ҫветтуй икумӗн“!

Упа ӗнине пӑрахат,
Йарса илет ухмаха,
Йунлантарса пӗтерҫӗ,
Кӗҫех ҫисе йамарӗ,
Хырӑм выҫӑ пулмарӗ.

Аран-аран упаран
Уйӑрӑлҫӗ ҫак укмах,
Аран-аран уткалат,
Хӑйен килне таврӑнат.

Макӑратӗ, йеретӗ
Йун йухтарса пыратӗ
Амӑшӗпе арӑмӗ
Тытӑнҫӗҫӗ ухмаха
Ҫӗлхе-ҫӑвар йӗркине
Тӗплӗ хытӑ вӗрентмӗ:

„Ухмах есӗ темӗн пек,
Асап куран ашак пек
Макӑрттаран шире те.
Санӑн ҫавӑ сӑмахах
Каламалаҫ ак ҫапла:

Санӑн ӗҫлемелеҫҫӗ,
Санӑн ӗҫлемелеҫҫӗ,
Санӑн ҫухӑрмалаҫҫӗ
Ҫав упана хӑратма!

Ухмах хытӑ итлерӗ,
Хӑлхине хыт ҫикрӗ,
Ӑслӑланса ҫитрӗ,

Тухрĕ те утрĕ
Инҫе кайса ҫӳреме,
Ҫут-ҫанталăка курма,
Хăйен ăсне катартма.

Пыраť ухмах уйпала,
Йанăралпа салтаксем
Ăна хирĕҫ пулаҫҫĕ.
Ҫавăсене курсассăн
Пирĕн ухмах тытăнҫĕ.
Кăшкăрма та ҫухăрма,
Ĕҫлеме те ĕрлеме.

Йанрал куҫне уҫрĕ,
Салтаксене ал сулҫĕ.
Лешсем ăна итлесе
Йарса илҫĕҫ ухмаха,
Ҫаппăрĕҫ те пăрахрĕҫ,
Ухмах ҫунне кăларҫĕҫ.

---

## Пулăҫăпа ылттăн пулă.

Ĕлĕк авал пĕр ҫĕрте
Кăвак тинĕс хĕрринҫе
Кивĕ лутра ҫĕр пӳртре
Пĕр старикпе пĕр карҫăк
Ĕмĕрленĕ ĕмĕрне
Ҫитмĕл ҫул та ҫиҫĕ ҫул.

Старик хӑйӗн майӗне
Пулӑ тытнӑ нӗретне,
Унӑн ырӑ карҫӑкӗ
Аврланӑ кӗнҫеле.

Пӗрре ҫакӑ ӑстарик
Нӗрет лартнӑ тинӗсе.
Пулӑ тулас вырӑнне
Йӑлха тулнӑ туллийех.

Тепӗре ҫак ӑстарик
Нӗрет лартнӑ тинӗсе;
Пулӑ тулас вырӑнне
Тулнӑ тинӗс курӑкӗ.

Виҫҫӗмӗш хут ҫак старик
Нӗрет лартат тинӗсе,
Кӗрет унта пӗр пулӑ,
Етем курман ылттӑн пулӑ.

Ылттӑн пулӑ тытӑнат
Етем сӑмах ҫӗлхипе
Старике йӑлӑнма:
„Йарӑсин-ҫҫӗ тинӗсе.
Есӗ мана, пулӑҫӑ,
Епӗ сана ҫавӑншӑн
Мӗн ыйтнинe парӑттӑм“.

Ҫакна илтсен старик
Хытса кайат тӗлӗнсе:
Ҫитмӗл ҫулта ҫиҫӗ ҫул
Пулӑ тытнӑ ҫав старик,

Анҫах пулă калаҫни.
Пулман ҫакă таранҫҫен.
Йаҫĕ старик тинĕсе
Хаҫхи пулла ирĕке,
Ăшă сăмах межи:
„Турă пултăр санпала,
Мана нимте кирлĕ мар.
Кайах, пулă, тинĕсе,
Ҫӳрех унта ирĕкре“.
Кайрĕ килне старик
Тĕлĕнмелле ĕҫ ҫинҫен
Каласа паҫĕ арăмне:
„Епĕ пайан пул тытрăм,
Ахалне мар—ылттăнне.
Етем пекех ҫав пулă
Мана сăмах каларĕ:
Тинĕсе мана йар терĕ,
Епĕ сана ҫавăнштăн
Мĕн ыйтнине тăвăп, терĕ.
Ним ыйтма та хăймарăм.
Йатăм пулла тинĕсе“.
Карҫăк тӳрех тытăнҫĕ
Старике йатлама:
„Ухмах есĕ, ват супнă;
Ним ыйтма та пĕлеймен!
Ыйтас-ҫĕ хут вăлашка.
Пирĕн хамăрăн вăлашка,
Пăрахăҫа тухнă ҫурăлса“.

Хӑй карҫӑкне итлесе
Кайрӗ старик пул патне.

Кӑвак тинӗс тикӗс мар,
Пӑртакҫӑ вӑл хумханаť.
Пирӗн старик тытӑнҫӗ
Ылттӑн пулла йӑхӑрма:

Ылттӑн пулӑ тухрӗ те
Старике каларӗ:
„Мӗн кирлӗ сана, старик?"
Старик ӑна пуҫҫапса
Калаť ҫакӑ сӑмаха:

Ҫырлах, пулӑ-тӑхлаҫӑ!
Мана, ватӑ старике,
Ҫисе йараť карҫӑкӑм:
Вӑлашка ыйтма вӑл хушаť,
Пирӗн хамӑрӑн вӑлашка
Пӑрсахӑҫа тухнӑ ҫурӑлса".

Пулӑ калаť старике:
„Кайах киле, старик!
Пулӗ сире вӑлашка!"
Старик утрӗ килнелле.
Килне ҫитсен куратӗ—
Выртаť ҫӗнӗ вӑлашка.

Пирӗн карҫӑк тытӑнаť
Тата хытӑрах йатлаҫма:
„Ухмах есӗ, тӑм писмен!
Ыйтса килҫӗ вӑлашка!

Вӑлашканӑн уссийӗ
Пире нумай усрӗ-и?
Кай ҫасӑрах кайалла
Хамӑр валли пӳрт ыйтма!“

Каллех кайрӗ старик
Кӑвак тинӗс хӗррине.

Кӑвак тинӗс хумхапат,
Шывӗ пӑртак пӑтранат.
Старик ҫӗнет хай пулла.
Пулӑ тухат те ыйтат:
„Мӗн кирлӗ сана, старик?“

Старик ӑна пуҫҫапрӗ,
Пуҫҫапрӗ те каларӗ:
„Ҫырлах, пулӑ-тӑхлаҫӑ,
Карҫӑк тата хытӑрах
Мана вӑрҫса пӗтерҫӗ
Пӳрт ыйтат ҫав карҫӑк!“

Пулӑ старике каларӗ:
„Кайах киле, ан хуйхӑр,
Пулӗ сире ыйтнӑ пӳрт“.

IV

Старик кайрӗ килнелле.
Килне ҫитсен курат:
Лутра ҫӗр пӳрт вырӑнҫе
Лара парат ҫӗнӗ пӳрт:
Пӑхма хайӗ тап-таса,
Тӑруписем шап-шурӑ,
Паҫалӑхсем йуманран,

Ҫӳреҫисем умӗнҫе
Карҫӑк ларатӑ йантрататӑ!
„Ухмах есӗ, ват сухал!
Мӗне кирлӗ мана пӳрт!
Манӑн пулӑҫ арӑмӗ
Пулас килмест такҫанах!
Улпут майри пулас теп!
Ҫуп ҫасӑрах пул патне!
Старик ҫупатӑ пул патне.
Кӑвак тинӗс йака мар,
Хумханатӑ вӑл, пӑтранатӑ,
Кӑвак хумсем кӑларатӑ.
Ылттӑн пулӑ тухатӑ те
Старикрен ыйтатӗ:
„Мӗн кирлӗ сана, старик?“
Старик пулла пуҫ-ҫапатӑ:
Ҫырлах, пулӑ-тӑхлаҫӑ!
Манӑн ватӑ карҫӑкӑм
Тата пушшех йӳтетӗ:
Памастӑ мана канма та,
Санӑн патна хӑвалатӑ—
Улпут майри пуласшӑн!
Пулӑ калатӑ старике:
Кайах киле, ан хуйхӑр,
Пулӗ санӑн арӑму
Улпут майри малашне!
Кайатӑ килне старик.
Пӑхатӑ—икӗ хутлӑ ҫурт;

Пӳртӗ кӳнҫе карҫӑкӗ,
Улпут майри пулнӑскер,
Лара парӑ улпутла:
Тумтирӗсем тап-таса,
Ылттӑн-кӗмӗл йӑлкӑшаӑ.
Ун умӗнҫе тарҫисем
Сӑмах кӗтсе тӑраҫҫӗ.
Вӑл вӗсене хӗнет,
Ҫӳҫӗсенҫен туртаӑ.
Старик калаӑ карҫӑкне:
„Улпут майри, таса-и?
Ҫуну ӗнтӗ лӑпланҫ-и!“
Карҫӑк ӑна кӑшкӑрҫӗ
Кӗҫех тытса хӗртмерӗ,
Хуса йаҫӗ витене
Сыснасемпе пурӑнма.
Иртет хулен пӗр ерне,
Иртет икӗ ерне те.
Пирӗн улпут майрийӗ
Йуте пуҫлаӑ хытӑрах.
Старикке ҫӗнтерет,
Ылттӑн пулӑ патне
Ӑна татах хӑвалаӑ:
„Улпут майри пурӑнӑҫӗ
Мана ӗнтӗ йӑлӑхтарҫӗ,
Патша майри пулас теп!“
Старик ӳкрӗ хӑраса,
Пӗтӗм вӑйне пуҫтарса

Калаҫ хӑйен арӑмне:
„Мӗн ес, карҫӑк, хӑтланан!
Ухмах курӑк ҫирӗн-и?
Майпе утма пӗлместӗн,
Ҫӗлхӳ ытла ҫарусӑр.
Патша майри пулсассӑн,
Пӗтӗм тӗнҫе халӑхӗ
Кулӗ санран ухмахран!“
Карҫӑк кайрӗ ҫиленсе,
Упӑшки патне пыҫӗ те
Ҫат! Тутарҫӗ питӗнҫен:
„Есе мӗнле хӑйатӑн
Манпа ҫапла калаҫма:
Улпут майри епӗ пур,
Ухмах мушик есӗ пур!
Кай ҫасӑрах пул патне!
Ху ирӗккӗн каймасан,
Илсе кайӗҫ ирӗксӗр!“
Старик пуҫне ҫикрӗ те
Утрӗ тинӗс хӗррине.
Кӑвак тинӗс хумханаҫ,
Хура хумсем кӑлараҫ.
Пирӗн ватӑ старик
Ылттӑн пулла йыхӑраҫ:
Ылттӑн пулӑ тухаҫ те
Старикрен ыйтаҫ:
„Мӗн кирлӗ сана, старик?“
Калаҫ старик ӑна хирӗҫ:

„Çырлах, пулă-тăхлаԃă!
Пĕтĕмпех ман карԃăкăм
Тухса кайрĕ ухмаха.
Хаԃ ĕнтĕ вăл, ӳхреп куç,
Улпут майри пуласшăн мар,
Патша майри пуласшăн“.

Пулă калат старике:
„Йурĕ, старик, ан хуйхăр,
Кайах хăвăн килĕне.
Пулĕ санăн арăму
Патша майри малашне“.

VI

Старик килне çитрĕ те
Куç-пуç кайат ԃарăлса
Патша çурԃĕ умĕнԃе,
Унăн пӳлĕмĕсенԃе
Çӳрет патша майриĕ.

Ăна хурт пек сырăннă
Йанралсемпе улпутсем,
Хаклă ерех ĕçеççĕ,
Тутлă пĕремĕк çийеççĕ.
Йĕри-тавра çар тăрат,
Пинĕ пуртă курăнат.

Çакна пурне курсассăн,
Хăраса кайрĕ старик,
Арăмне ӳксе пуç-çапрĕ,
Сывлăх ыйтса каларĕ:

„Сыв-и патша майрийӗ,
Манӑн ватӑ карҫӑкӑм!
Халӗ ӗнтӗ ҫитрӗ-и,
Ҫуну санӑн лӑпланҫи!“
Пирӗн патша майрийӗ
Старик ҫине пӑхмарӗ,
Куҫ умӗнҫен инҫерен
Хуса йама каларӗ.
Ӳлпутсемпе салтаксем
Ӑна йарса тытрӗҫ те
Ҫурӑмӗнҫен тепкерӗҫ,
Ҫунпе кӗҫех кӑлармарӗҫ.
Ҫакна халӑх та курҫӗ,
Кулса йаҫӗ ахлатса:
„Ҫав кирлӗ ухмаха,
Хӑй вырӑнне пӗлмене!“
Иртсе кайрӗ пӗр ерне
Иртрӗ икӗ ерне те,
Иртсе кайрӗ уйӑх та,
Пирӗн патша майрийӗ“
Йӳте пуҫлаӗ хытӑрах,
Старикне ҫӗнтерет.
Ӑна уйӑх шырарӗҫ,
Уйӑх иртсен тин тупрӗҫ.
Патша майрийӗ патне
Ҫавтса пыҫӗҫ салтаксем.
Карҫӑк калаӗ старике.
Патша майри аслах мар,

Тинĕс патши пит аслă.
Тинĕс патши пулас теп.

Пĕтĕм тинĕс кайăксем
Тăҫҫăр мана итлесе;
Ылттăн пулă хăйĕ те
Пултăр манăн ҫурамăм,
Манăн умăмра ҫӳретĕр,
Еп хушнипе итлетĕр".

Пĕр сăмахта старик
Хăйаймарĕ калама,
— Утрĕ тинĕс хĕррине
Ылттăн пулла пуҫ-ҫапма.

Кăвак тинĕс хумханат,
Хура хумсем кăларат,
Хура хумсем ҫупаҫҫĕ,
Сăртсем пекех пулаҫҫĕ,
Ҫĕр ҫухрăма шавлаҫҫĕ.

Ылттăн пулĕ тухрĕ те
Старикрен ыйтрĕ:
„Мĕн кирлĕ сана, старик"?
Старик ҫĕре ҫитиҫҫен
Пуҫне тайрĕ, пуҫ-ҫапрĕ:

„Ҫырлах, пулă-тăхлаҫă,
Мĕн тăвас ман карҫăка,
Тăнсăр—пуҫсăр хăйамата!
Халь ĕнтĕ вăл, ҫĕр ҫăтман,
Тинĕс патши пуласшăн,

Сана тарҫа илесшӗн“.
Ылттӑн пулӑ нимӗн те
Ҫакна хирӗҫ ҫӗнмерӗ.
Хӑйен ылттӑн хӳрипе
Тинӗс шывне ҫапрӗ те,
Анса кайрӗ тинӗсе,
Тинӗс шывне ирӗке.
Кӑвак тинӗс хӗрринҫе
Пулӑ тухасса кӗтсе
Тӑҫӗ старик нумайҫҫен.
Ылттӑн пулӑ тухмарӗ,
Старик ӑна курмарӗ.
Тӑрсан тӑрсан пулӑҫӑ
Утрӗ вара килнелле
Пуҫне ҫиксе хуйхӑрса,
Пуҫӗ пӗтесрен хӑраса.
Ҫитрӗ килне старик,
Пӑхать—каллех ҫурӑк вӑлашка
Каллех кивӗ лутра пӳрт,
Каллех карҫӑк кӗнҫеле
Авӑрласа ларать,
Ҫалӑш хӗсӗк пӳртре.

Чувашская
Книжная палата

Хакĕ 2 т. 25 п.

Казань, 3-я Государственная типография.